28-мĕш çул тухать. Ханĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 25 ЫТЛАРИКУН 250 (7001) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хăçачĕ

Вăрлăх — колхозăн ылттăн фончĕ

Пысăк тухăçлă тырпул туса илесси вăрлăхран пуман килет. Ахальтен мар ĕнтĕ халăх сăмахĕ: «мĕн акатăн, çавна выратăн», тесе асăрхаттарать. Вăрлăх фондне çитĕнĕклĕ таран тырă хывас, ăна вăхăтра тасатас тата лайăх пăхса усрас ĕç колхозăн тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире колхозсемпе совхозсене вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула, вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывиччен, вăрлăхлăх хывнисĕр пуçне, мĕнле те пулин урăх çĕре ярса тăкаклама чарчĕç. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула вырăнсăр салатăшăн айăплă сынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарчĕç.

Партипе правительствăн çак постановленине пурнăçласа пыракан колхозсем çитĕнĕклĕ таран вăрлăх хывнă тата ăна акма юрăхлă кондицине лартас тĕллĕпне кулленех тăрăшса ĕçлеççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт», «Балтиец», «Луч» тата ытти нумай колхозсенче вăрлăха кирлĕ таранах хывнă, ăна тасатас енĕпе пикенсе ĕçлеççĕ тата шăтас пахалăхне тĕрĕслеме районри вăрлăх лабораторине яраççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос», Чкалов ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсенче те вăрлăх çитĕнĕклĕ, ăна сортлас ĕç те ăнăçлă пырать. Елчĕк районĕнчи Ворошилов, Чапаев ячĕселлипе тăракан колхозсем вăрлăх фондне çитĕнĕклĕ тырă хывса, ăна сортласа тата пĕтернĕ.

Вăрмар районĕнчи пур колхозсем те вăрлăх фондне çĕр процентчĕпех хывса çитернĕ. Вăрлăх фондне хывас ĕç Калинино, Чурачăк тата ытти хăшпĕр районсенче те лайăх пырать. Анчах та республикипе илсен, вăрлăх хывас тата ăна сортласа тасатас ĕç ытла та çитĕнĕксĕр пулса пырать. Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă районĕсем вăрлăх 30—45 процент таран кăна хывнă. Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Октябрьски, Первомайски, Вăрмар, Шупашкар, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсенчи колхозсенче те вăрлăх фондне тырă хывас ĕç калама çук начар пырать. Çак районсенчи колхозсем вăрлăх хывмалли плана сурринчен кăштах пытларах кăна тултарнă. Асăннă районсенче вăрлăха тасатас тĕллĕпне те нимĕн те тумаççĕ-ха. Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпари «Коммунист» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăх участокĕнчен пухса илнĕ тырра пытти тырăсемпе хутăштарса янă. «Коммунист» колхозăн (председателĕ П. Крылов юлташ) 400 центнер вăрлăх çитмест. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра çак вăхăта çитсе те аван çапса пĕтермен. Вăрлăхлăх тырра сортласа тасатас енĕпе кунта нимĕн те тумаççĕ. Сĕнтĕр районĕ государствăна тырă парас енĕпе республикăра малта пычĕ. Çав вăхăтрах кунта вăрлăх хывас тĕллĕпне кирлĕ пек ĕçленине курма çук-ха. Районăн тулă вăрлăхне 66 процент, вир 53 процент, кантăр вăрлăхне 43,8 пропент, курăк вăрлăхне 15,2 процент кăна хывнă. Ку районри «Наука» колхозра (председателĕ Сорокин юлташ) ăнса пулнă кантăра юр айне янă, çапла вара кунта кантăр вăрлăхĕ пĕр килограмм та çук. Çак тĕслĕхсем вĕсем колхоз руководителĕсем килес çулхи тырпул тухăçлăхĕ çинчен шутламаннине кăтартаççĕ. Кашни колхозах вăрлăх фондне пур тырăсем енĕпе те халех хывса çитерме тивĕç. Вăрлăх хывнипе пĕрлех ăна сортласа тасатасси те колхозсем умĕнче тăракан ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Колхозсенчи тырă тасатакан пур тĕрлĕ машинăсемпе те усă курмалла, кунпа пĕрлех çаврака аласемпе алассине тата алăпа çуйлассине кашни колхозрах организацилемелле. Правительство постановленийĕ тăрăх, колхозсен пĕтĕм сĕрĕ çине акакан вăрлăх тасалăхĕ 95 процентран, вăрлăх участокне акакан вăрлăх тасалăхĕ 97 пропентран кая пулмалла мар. Райсемхозсенче вăрлăхсен сорчĕ тата шăтас пахалăхĕ 99 процент пулмалла. Шăтас пахалăх çинчен вăрлăхсем виçĕ класа уйрăлаççĕ. Райсемхозсен тата вăрлăх участокĕсене акакан вăрлăхăн пахалăхĕ пĕтĕмпех пĕрремĕш класра пулма тивĕç. Районри вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисем халĕ колхозсен вăрлăхне тĕрĕслес тĕллĕпне пикенсе ĕçлемелле. Районсенчи сĕрĕç пайĕсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен колхозсенче вăрлăх хатĕрлес тĕллĕпне пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Агроном халĕ вăрлăх хатĕрлес ĕçе организацилекенĕ пулса тăмалла.

Кăçал аван çапнă вăхăтра çанталăк йĕпе-сапаллă пулнă пирки чылай колхозсенче вăрлăхлăх тырăсем çурăр пулчĕç. Çакă вăл вăрлăхлăх тырра типĕтес ĕçе йĕркелесе ямалла. Ку ĕçе агрономсем ертсе пымалла. Мĕншĕн тесен пĕлмесĕр типĕтни вăрлăхсăр хăварма пултарать. Типĕтнĕ çĕрте ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем агроном канашĕпе сĕнĕвĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

Вăрлăх — колхозăн ылттăн фончĕ, вăл колхоз пурнăçĕн пуласлăхне татса парать. Çавăнпа та вăрлăха кашни колхозрах куç шăрçине сыхланă пек сыхласа тăмалла. Вăрлăх хывнă амбарсене хураллама чи шанчăклă тата чи хастар колхозниксене уйăрас пулать. Колхоз председателĕ, бригадирсем тата колхозри ревизи комисси председателĕ вăрлăх мĕнле тăнине, ăна мĕнле хуралланине вăхăтран вăхăта тĕрĕслесех тăма тивĕçлĕ.

Халĕ çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет. Çак калама çук пысăк политикăллă кампани ячĕпе çĕршывра социализмлă ăмăртăва хутшăнса, районри финанс работникĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Ку тĕллĕпне уйрăмăнах Сятракасси ял Совечĕ малта пырать. Ку ял Совечĕ IV-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана ноябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне 103 пропент тултарнă. Актив кунта финанс планне тултарас ĕçе хастарлăн хутшăннă. СССР Верховный Советне суйламалли Положение ăнлантарнă май агитаторсем колхозниксене государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татма чĕнеççĕ.

Çавăн пекех IV-мĕш кварталти финанс планне тултарас тĕллĕпне Нарат-Чакки тата Кĕчкей ял Совечĕсем те лайăх ĕçлеççĕ. Ку ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана пур тӳлевсем тăрăх та ытлашшипех тултарнă. Чăнкасси, Карабаш, Умалуй ял Совечĕсем те финанс планне ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

Вăрлăх пахалăхне тĕрĕслессĕ

ÇĔРПӲ. 1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ колхозсем çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Кунта чи малтан çитĕнĕклĕ таран вăрлăх çинчен каласа панă.

— Пĕтĕм çĕршыв калама çук политикăллă пысăк çĕкленӳпе СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет,—тет Абрикосова юлташ,—пирĕн коллектив та суйлав ячĕпе ăмăртăва хутшăнма тытăнă. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсемпе ялхуçалăх машинĕсене юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. СССР Верховный Советне суйламалли кун—февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пирĕн коллектив тракторсене юсамалли плана пĕтĕмпех тултарма пултарать.

10-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Степанов юлташ, МТС-ăн старши механикĕ Коночкин юлташ Абрикосова юлташăн сĕнĕвне ырласа тракторсене февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме условисем çитĕнĕкли çинчен каласа парассĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме тата çураки вăхăтĕнче ĕçлеме кирлĕ таран готовчи кӳрсе хума обязательство илнĕ. Халĕ илнĕ обязательствăна пурнăçласси-шĕн анлă ăмăрту пырать.

Çăлăх пухăнăве тĕрĕслессĕ

ÇĔРПӲ. 1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ колхозсем çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Кунта чи малтан çитĕнĕклĕ таран вăрлăх çинчен каласа панă.

— Пĕтĕм çĕршыв калама çук политикăллă пысăк çĕкленӳпе СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет,—тет Абрикосова юлташ,—пирĕн коллектив та суйлав ячĕпе ăмăртăва хутшăнма тытăнă. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсемпе ялхуçалăх машинĕсене юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. СССР Верховный Советне суйламалли кун—февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пирĕн коллектив тракторсене юсамалли плана пĕтĕмпех тултарма пултарать.

10-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Степанов юлташ, МТС-ăн старши механикĕ Коночкин юлташ Абрикосова юлташăн сĕнĕвне ырласа тракторсене февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме условисем çитĕнĕкли çинчен каласа парассĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме тата çураки вăхăтĕнче ĕçлеме кирлĕ таран готовчи кӳрсе хума обязательство илнĕ. Халĕ илнĕ обязательствăна пурнăçласси-шĕн анлă ăмăрту пырать.

Çăлăх пухăнăве тĕрĕслессĕ

ÇĔРПӲ. 1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ колхозсем çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Кунта чи малтан çитĕнĕклĕ таран вăрлăх çинчен каласа панă.

— Пĕтĕм çĕршыв калама çук политикăллă пысăк çĕкленӳпе СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет,—тет Абрикосова юлташ,—пирĕн коллектив та суйлав ячĕпе ăмăртăва хутшăнма тытăнă. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсемпе ялхуçалăх машинĕсене юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. СССР Верховный Советне суйламалли кун—февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пирĕн коллектив тракторсене юсамалли плана пĕтĕмпех тултарма пултарать.

10-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Степанов юлташ, МТС-ăн старши механикĕ Коночкин юлташ Абрикосова юлташăн сĕнĕвне ырласа тракторсене февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме условисем çитĕнĕкли çинчен каласа парассĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме тата çураки вăхăтĕнче ĕçлеме кирлĕ таран готовчи кӳрсе хума обязательство илнĕ. Халĕ илнĕ обязательствăна пурнăçласси-шĕн анлă ăмăрту пырать.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

Суйлав ячĕпе

Çĕрпӳ МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсен, рабочисемпе техниксен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Пухура Краснодар крайĕнчи Старо-Мыштастовски МТС коллективĕ социализмлă ăмăрту пуçарса ярасси çинчен чĕнсе каланинпе сӳтсе-явнă.

МТС-ри пуçламăш парти организацийĕн секретарĕ Абрикосова юлташ СССР Верховный Советне суйламалли кун çитĕнӳпе кĕтсе илес тесен, мĕн-мĕн тумалли çинчен каласа панă.

— Пĕтĕм çĕршыв калама çук политикăллă пысăк çĕкленӳпе СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет,—тет Абрикосова юлташ,—пирĕн коллектив та суйлав ячĕпе ăмăртăва хутшăнма тытăнă. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсемпе ялхуçалăх машинĕсене юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. СССР Верховный Советне суйламалли кун—февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пирĕн коллектив тракторсене юсамалли плана пĕтĕмпех тултарма пултарать.

10-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Степанов юлташ, МТС-ăн старши механикĕ Коночкин юлташ Абрикосова юлташăн сĕнĕвне ырласа тракторсене февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме условисем çитĕнĕкли çинчен каласа парассĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме тата çураки вăхăтĕнче ĕçлеме кирлĕ таран готовчи кӳрсе хума обязательство илнĕ. Халĕ илнĕ обязательствăна пурнăçласси-шĕн анлă ăмăрту пырать.

Çăлăх пухăнăве тĕрĕслессĕ

ÇĔРПӲ. 1945 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ колхозсем çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Кунта чи малтан çитĕнĕклĕ таран вăрлăх çинчен каласа панă.

— Пĕтĕм çĕршыв калама çук политикăллă пысăк çĕкленӳпе СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет,—тет Абрикосова юлташ,—пирĕн коллектив та суйлав ячĕпе ăмăртăва хутшăнма тытăнă. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсемпе ялхуçалăх машинĕсене юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. СССР Верховный Советне суйламалли кун—февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пирĕн коллектив тракторсене юсамалли плана пĕтĕмпех тултарма пултарать.

10-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Степанов юлташ, МТС-ăн старши механикĕ Коночкин юлташ Абрикосова юлташăн сĕнĕвне ырласа тракторсене февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме условисем çитĕнĕкли çинчен каласа парассĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме тата çураки вăхăтĕнче ĕçлеме кирлĕ таран готовчи кӳрсе хума обязательство илнĕ. Халĕ илнĕ обязательствăна пурнăçласси-шĕн анлă ăмăрту пырать.

Ĕç пĕтнĕ хыççăн

ШАХАСАН. Çĕрле кăпăшка юр çунă, пр енне уйсем, пахчасем шур тумпа витĕннĕ. Ĕнер наряд илнĕ колхозниксем кĕтмен çĕртенех çуса лартă юр çийĕпе урапапах тухнă.

— Асту-ха, хĕллех пулас тет-им? Иртерех пулмарĕ-и ку капла?—хăй тĕллĕнех каласса кĕнĕ колхозри парторганизацин секретарĕ Степан Осипович Осипов колхоз канцелярине. Канцелярине вăл пынă чухне райком представителĕ Нимаков юлташ колхоз председателĕпе калаçса ларнă.

— Хĕле кĕтĕмĕр. Кĕçех СССР Верховный Советне суйламалли кун та çитет. А эпир... эпир аван çапса пĕтермен, — каласăва хутшăнчĕ Осипов юлташ.

Каçхине колхозри мĕнпур коммунистсене, агитаторсемпе колхоз бригадирĕсене пухрĕç. Кĕске вăхăт хушшинче аван çапса пĕтерме палăртса хăварчĕç. Ку вăл октябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче пулса иртрĕ.

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз—районра чи пысăк колхозсенчен пĕри. Колхозра 10 бригада. Кашни бригадăра 4-шар агитатор.

Елена Павловна Волкова учительница 6-мĕш бригадăра агитаци ĕçне ертсе пырать. Вăл колхозниксене суйлав Законне вĕрентес тĕллĕпне лайăх ĕçлет. Вăл калаçнине колхозниксем юратса итлеççĕ. Волкова юлташ суйлав Положенине колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса парать. Колхоза çĕнтерӳçĕ-воинсем те чылай тавăннă, вĕсене те колхозниксем питĕ интересленсе итлеççĕ. Евдоким Семенов, Архип Сорокин юлташсем нумай пулмасть Берлинран тавăннă. Иккĕшĕ те вĕсем коммунистсем. Политика ыйтăвĕсене начар мар пĕлеççĕ. Вĕсене агитколлектива явăстарнă. Лайăх агитаторсем вĕсем.

Лидия Сергеева ялти шкулта учительница пулса ĕçлет. Ана виççĕмĕш бригадăна çирĕплетнĕ. Суйлав законĕ çинчен вăл 5 заняти иртернĕ. Агитаторсем суйлав Положенине ăнлантарнисĕр пуçне, Сталинла Конституци çинчен çырнă статьясемпе усă кураççĕ. Çавна май колхозниксем хушшинче иртерекен калаçусем чылай лайăхланнă. Агитатор Сергеева юлташ колхозниксене занятисем пуçланас умĕн илемлĕ литература кĕнекисене вуласа парать.

Колхозниксем агитаторсене нумай ыйтусем параççĕ. Ыйтусене агитаторсем тĕплĕн ответлеççĕ. Агитколлектив руководителĕ Ананьев юлташ час-часах агитаторсене семинара пухать.

Декабрĕн 14-мĕшĕнче 7 сехетре колхоз правлени канцелярине агитаторсем пухăнчĕç. Чи малтан яли 7 çул вĕренмелли шкулти учительсемпе учительницăсем килчĕç. Вĕсем хыççăн ытти агитаторсем те пустарăнса ларчĕç. Агитколлектив руководителĕ агитаторсем мĕнле ĕçлени çинчен ыйтса пĕлчĕ, ыйтусене ответлерĕ, агитаторсем хăйсен ĕçĕсем çинчен каласа панă.

— Эпĕ 8 заняти тунă,—терĕ агитатор Морозова юлташ,—колхозниксем занятисене хаваласнах пухăнаççĕ, интересленсе итлеççĕ, нумай ыйтусем параççĕ. Положение вĕреннипе пĕрлех Конституци çинчен, вырăнти ĕçсем çинчен, укçа-тенкĕ пуханасси, пирĕн укçа халăх хуçалăхне тĕрĕклетме кайни çинчен, Сталин юлташăн «СССР-ти халăхсен Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» сырнă кĕнеки тăрăх калаçусем иртteретĕп.

Агитаторсем харпăрхăй мĕнле ĕçлени çинчен юлташĕсене каласа параççĕ. Ку тараннăй агитаторсен 6 семинар пулнă. Çак семинарсенче агитаторсем пĕрпĕрин опычĕпе паллашнă.

С. ШАДИН.

Агитатор—кĕтнĕ хăна

ИШЛЕЙ. Анат Кĕнер ял Советĕнчи «XI-летие Чувашии» колхозра 7 агитатор. Кашни агитатора 8—10 килĕ çырĕплетсе панă. Кашни каçах, колхозри хĕрӳллĕ ĕç хыççăн, агитаторсем суйлавçăсем патĕнче пулаççĕ. Колхозри агитаторсенчен пĕри—Семен Ильич Ильин колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Унăн участокĕнче 7 хуçалăх, вĕсенче 15 суйлавçă. Ильин юлташ суйлавçăсене пухса 4 хутчен суйлав Положенийĕ çинчен каласа панă. Тĕрлĕ сăлтавсемпе килĕсенчен тухайман суйлавçăсем патне килĕсене кайса çӳренĕ. Халĕ ăна çирĕплетсе панă участокри кашни суйлавçă суйлав законне тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Г. Петров—колхоз счетоводчĕ, унăн участокĕнче 9 хуçалăх. Вăл 4 хутчен суйлавçăсене пухса каласу иртернĕ, ку участокри суйлавçăсем пурте суйлав çинчен тĕплĕн пĕлеççĕ. И. Зайцев, М. Ильин, Р. Зайцев, К. Данилова агитаторсем те хăйсене çирĕплетсе панă участокĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Суйлав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, колхозра чылай ĕçсем тунă. Ялхуçалăх ĕçне ăнăçлă вĕçленĕ, государствăна тырă памалли плана пурнăçланă, планран иртерсе государствăна 360 пăт тырă панă. Вăрлăхсене пур культурăсем енĕпе те хывнă, пĕрремĕш хут тасатнă, халĕ 2-мĕш хут тасатаççĕ. Кашни кунах çирĕ тислĕк турттараççĕ, паянхи куна 450 лав кăларнă.

В. ГУСЬКОВ.

Суйлав ячĕпе стахановла вахта

ÇĔМĔРЛЕ. Комбайн деталĕсем тăвакан завод коллективĕ, СССР Верховный Совет суйлавĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, çулталăкри производство планне декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

Социализмлă ăмăртăва сарса пырса тата стахановла ĕç меслечĕсемпе туллин усă курса, завод коллективĕ хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçларĕ. Декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне завод çулталăкри плана комбайнсем валли запаслă пайсем туса кăларас тĕллĕпне 100,5 процент тултарчĕ.

Суйлав умĕнхи ăмăртура уйрăмăнах Шукин юлташ начальник пулса ĕçлекен пех малта пырать. Ку цехри Семенова, Данилова, Грекова станочницăсем 2—3 сыпăн ĕçлеççĕ.

Завод 12 процент чухлĕ энерги перекетленĕ, туса кăларакан продукцин хакне 10 процента сити чакарнă, рабочисен ĕç тухăçлăхне 12 процента çити ӳстернĕ.

Районсенчи парти активĕн пухăвĕсем

Çак кунсенче районсенче парти активĕн пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пухусенче СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май парти организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен докладсем итлесе сӳтсе-явнă.

Елчĕк районĕнче ку ыйтупа Александров юлташ доклад туса панă. Районра СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май чылай ĕçсем туса иртернĕ. Районĕпе 37 суйлав участокĕ организациленĕ, çавăн чухлех агитпунктсем туса хунă. Мĕнпурĕ 433 агитатор ĕçлет, вĕсенчен 169 коммунист, 168 комсомолец, ытти сем партире тăманнисем. Суйлава хатĕрленнĕ май агитаторсен вăйĕпе 104 лекци вуласа панă.

Сталинла Конституцине суйлав Положенине вĕренес ĕçе Патрекел ял Советĕнче лайăх йĕркеленĕ. Агитаторсем кунта тăрăшса ĕçлеççĕ. Суйлава хатĕрленес майпа ыйтусемпе ответсен вечерĕ иртернĕ, икĕ спектакль лартнă.

Суйлав участокĕсем валли суртсем уйăрса панă, анчах вĕсене хатĕрлес ĕçре çитменлĕхсем чылай. Тăрăн ял Советĕнче суйлав участокне клуба вырнаçтарма палăртнă, анчах клубне юсамаççĕ. Клуб чӳречисем çĕмрĕк, алăкĕсем йĕркеллĕ мар.

* * *

Октябрьски районри парти активĕн пухăвĕ çак ыйтупах Г. Алексеев юлташăн докладне итлесе сӳтсе-яврĕ. Докладра палăртнă тăрăх, райпарторганизацини суйлава хатĕрленес тĕллĕпне чылай ĕçсем тунă. Суйлав законне анлантарас ĕç пуринчен ытла Нарат-Чакки ял Советĕнче лайăх пулса пырать. Суйлав законне вĕренес тĕллĕпне кунта 9 доклад, 2 лекци тата каласусем иртернĕ. Ватă суйлавçăсем патне агитаторсем килсене сӳресе ăнлантараççĕ. Агитаци ĕçне кунта хуçалăх ыйтăвĕсемпе сыхăнтарса пыма пĕлеççĕ.

Анчах Хуракассинчи, Çичĕпӳртри, Чăнкассинчи партин пуçламăш организацийĕсем суйлав участокĕсен пӳлĕмĕсене хатĕрлес тĕллĕпне нимĕн те тумаççĕ. Суйлавçăсен списокĕсене тăвас тĕллĕпне ял Совечĕсене пулăшма сынсем уйăрман. Хăшпĕр вулав сурчĕсем вучăсăр лараççĕ.

Пренире 13 сын тухса каласрĕç. Юлашкинчен пуху ку ыйтупа тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

* * *

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи парти активĕн пухăвĕнче СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май парти организацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен Ф. Вороников юлташ доклад туса пачĕ.

Суйлав законне вĕренес тĕллĕпне кунта 200 кружок организациленĕ, районĕпе мĕнпурĕ 400 агитатор ытла ĕçлет. Макăç ял Советĕнче, суйлава хатĕрленнине хавхаланса, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарнă.

Çав вăхăтрах Спирт заводĕнче (директорĕ Вончак юлташ) суйлава хатĕрленни палăрмасть. Завод клубне, хĕрлĕ кĕтесе хупса лартнă, суйлав Положенине вĕренессине организацилемелле.

Списоксем тăвас тĕллĕпне районра пысăк çитменлĕхсем пур. Пуснаркасси, Упакасси ял Совечĕсенче суйлавçăсен списокĕсене тунă чухне йăнăшсем чылай кайнă. Списока суйлавçăсен хушамачĕсене кăна сырнă, ячĕсемпе ашшĕ ячĕсене сырман. Сĕнтĕрвăрри хула Совечĕ те ку тĕллĕпне тĕплĕ ĕçлемен: хунари виçĕ урамра пурăнакан суйлавçăсене списока кĕртмесĕр хăварнă.

Парти активĕн пухăвĕ вутă хатĕрлес плана тултарма, çуракине хатĕрленес тĕллĕпне татăклă ситĕнӳсем тума, агитацине пропаганда ĕçне лайăхлатма хушса решени йышăнса хăварчĕ.

—⊙—

БЧК-ОГПУ-НКВД-НКГБ 28 çул тултарнă ятпа Шупашкарта пулса иртнĕ лару

Декабрĕн 22-мĕшĕнче «Динамо» клубĕнче ВЧК-ОГПУ-НКВД-НКГБ 28 çул тултарнă ятпа Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕпе Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекен работниксен савăнăçлă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Ларăва пухăннисем тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн аслă Сталин ертсе пыракан Политбюро составне суйлаççĕ.

Лару президиумне ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕне И. М. Чарыков юлташа, Чăваш АССР Совнарком Председательне А. М. Матвеев юлташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне З. А. Андреева юлташа, Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне С. Е. Белолипецкий юлташа, Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарне С. Т. Митряшов юлташа тата ытти сене те суйлаççĕ.

«ВЧК-ОГПУ-НКВД-НКГБ 28 çул тултартарни» çинчен Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарĕ С. Т. Митряшов юлташ доклад туса пачĕ.

Ларăва пухăннисем пысăк çĕкленӳпе халăхсен аслă çулпуçне Генералиссимуса Сталин юлташа тата СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне Совет Союзăн Маршалне Берия юлташа саламлă çырусем яма йышăнчĕç.

И.В. Сталин Бирнс господина йышăнни

Декабрĕн 22-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарьне Бирнс господина йышăннă.

Каласнă çĕрте СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолĕ В. А. Гарриман господин пулнă.

И.В. Сталин Бевин господина йышăнни

Декабрĕн 24-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Э. Бевин господина йышăннă.

Калаçура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Союзăн Великобританири посолĕ Ф. Т. Гусев, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Яланхи Заместителĕ А. Кадоган господин тата Великобритани посолĕ А. К. Керр господин пулнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Бирнс господинпа Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Бевин господин Мускавра пурăннă май

Декабрĕн 23-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Д. Бирнс господин тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Бевин господин Пысăк театрта «Золушка» спектакльте пулнă.

Театрăн вăтаçĕрти ложинче Д. Бирнс господинпа Э. Бевин господин тата В. М. Молотов пулнă, вĕсемсĕр пуçне çаксем пулнă: Великобритани Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрсен Яланхи Заместителĕ А. Кадоган господин, Великобританин Совет Союзăнчи Посолĕ А. Керр господин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзăнчи Посолĕ А. Гарриман господин, Р. Буллард, В. Коэн, Д. Конант, Х. Матьюз, Р. Кампбелл господинсем тата ытти сем те.

Çăвăн пекех тата вăтаçĕрти ложăра çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Совет Союзăн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев тата ытти сем те.

Театрта Мускаври ытти посольствăсемпе миссисен пуçлăхĕсем, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем, Совет писчечĕпе ют çĕршывсен писчечĕн представителĕсем пулнă.

Вăтаçĕрти ложăна Америка, Британи тата Совет Союзăн флагĕсене çакса илемлетнĕ. Спектакль умĕн оркестр Америкăн, Британин тата Совет Союзăн гимнĕсене калана. Театра пухăннă халăх Д. Бирнс господина, Э. Бевин господина тата В. М. Молотова ăшшăн саламласа кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Вăрман хатĕрлекенсем хĕрӳ ĕçре

ЭЛĔК. Районри малта пыракан колхозсем СССР Верховный Совет суйлавне вăрман хатĕрлевĕн планне срокчен тултарнине кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхозран вăрманта 11 сын ĕçлет. Вĕсем пурте хăйсен планнине ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

«1-ое Мая» колхозăн Хĕрлĕ Çартан тавăннă бригали (бригадирĕ Тарасов юлташ) паха тĕслĕхсем кăтартать. Ку колхозран вăрман хатĕрлевĕнче 27 сын ĕçлет. Колхоз сезонри плана 50 процент тултарнă

Ф. КАТЕЕВ.

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Çамрăксен вăйлă тырпул туса илес тĕллĕпне ĕçлекен звенисен 1945 çулхи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

Ăмăртăва пурĕ комсомолецсемпе çамрăксен 1101 звени хутшăннă, вĕсенче 4853 комсомолецпа союзра тăман çамрăк ĕçленĕ.

Ăмăртура Красноармейски, Вăрмар, Елчĕк тата Вăрнар районĕсенчи комсомолецсемпе çамрăксен звенисем паха тĕслĕхсем кăтартнă. Уйрăмăнах Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозри Р. П. Петрова, А. Е. Егорова, О. Т. Трофимова, Н. Т. Трофимова юлташсем ертсе пыракан çамрăксен звенисем; Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз И. Н. Демидова, Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри Филиппова, В. С. Сидорова юлташсем ертсе пыракан звеносем паха тĕслĕхсем кăтартнă.

Вăйлă тырпулăн пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура **Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозри А. Е. Егорова юлташ ертсе пыракан звено пĕрремĕш вырăн йышăннă.** Вăл звено хăйне çирĕплетсе панă 1,02 гектар çĕр çинчен 68,72 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ. План тăрăх кашни гектартан 4 центнер туса илме пăхнă. Çак звенона куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавпа наградăлама ВЛКСМ Центральный Комитетне тăратма йышăннă.

Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри **Филиппова** юлташ ертсе пыракан çамрăксен звени хăйне çирĕплетсе панă 16 гектар çĕр çинчен кашни гектартан 32,7 центнер сĕлĕ пухса илнĕ. Планпа кашни гектартан 13 центнер туса илме пăхнă. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри **И. Н. Демидова** комсомолка ертсе пыракан çамрăксен звени кашни гектартан 28 центнер тулă туса илнĕ.

Комсом

Ялти врачсен республикăри съезчĕ тĕлне

Ялти врачăн тивĕçĕ

Ялти врачсен республикăри 2-мĕш съезчĕ мирлĕ вăхăтра, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳ туна çулталăкăн вĕçĕнче пулса иртет. Пирĕн пĕтĕм çĕршыв нимĕç пленĕрĕсем аркатса хăварнă заводсемпе фабрикăсене, хуласемпе ялсене, культурăллă учрежденисене, больницăсемпе амбулаторисене, ача-пăча учрежденийĕсемпе санаторисене юсаса ура çине тăратма тытăнчĕ.

Сталинла тăваттăмĕш пилĕкçуллăх планĕ пирĕн çершыври ĕçсыннисен нурăçĕнче культурине малалла татах та хăватлăрах ӳстерме май парĕ.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕç çав пилĕкçуллăх планĕнче хисеплĕ вырăн йышăнса тăрать. Уйрăмăн илсен, Чăваш республикинче çакăн пек пысăк ĕçсем тума палăртнă: Шупашкар хулинче 400 койка вырнаçмалăх çĕнĕ больница, Çĕмĕрле хулинче 150 койка вырнаçмалăх çĕнĕ больница тума, Куславкка районĕнчи Çĕнĕ Сала больницине 100 койка вырнаçмалăх аслăлатса çĕнетме палăртнă. Чăвăрлăри туберкулез санаторийĕнче койкăсен хисепĕ 150-ран 200 çити, Вăрнарти ачасен шăмă туберкулезне сыватас тĕлĕшне ĕçлекен санатории 150 койкăран 200 койкăна çити ӳсмелле.

Сакă вăл шутĕн партине правительствă Чăваш халăх сывлăхĕшĕн тимлĕн тăрăшнине татах та тепĕр хут кăтартса парать.

Ялти врачсен республикăри 2-мĕш съезчĕ хамăр çĕршыври государство влаçĕн аслă органне—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ паллă вăхăтра пулса иртет. Совет çĕршывĕнчи мĕнпур ĕçсыннисемне нĕрлех, медицина работникĕсем те пулас суйлава произволствăра çĕнĕ ситĕнӳсем тупине кĕтсе илме, вăрçăра çĕнтерсе илнине хĕрӳллĕ ĕçпе çирĕплетсе хăварма тăрăшаççĕ.

Чăваш республикинчи медицина работникĕсенчен пилĕшĕне, вĕсем халăх сывлăхне сыхлас тесе вăя хĕрхенмесĕр ĕçленĕшĕн, правительство наградисене панă. 26 сынна орденсемпе тата медальсемпе награднланă, 9 сынна РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕн ятне панă, 6 сынна Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕн ятне панă, 139 сынна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине наградланă, 79 сынна СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕ «Отличник здравоохранения» ятлă значокпе наградланă.

Пирĕн республикăра врачсем çителĕксĕр-ха. Пире 660 врач кирлĕ пулсан, пирĕн халĕ 253 врач кăна пур. Уйрăм специальноссем енĕпе пирĕн врачсем тата çителĕксĕртерех. Çакăн пирки ĕнтĕ ялти хăшпĕр больницăсенче врачсем сук. Çакăн пек лару-тăрăва кура, пилĕ врачсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмессĕр ĕçлеççĕ. Вĕсенчен Сосновка поселокĕнчи Пикерман врача, Етĕрне районĕнчи больница заведующине Одинцова врача, Комиссарова врача, Сĕнтĕр больницин заведующине—çамрăк врача Левендаль юлташа, Комаш районĕнчи Сикасси больницинче ĕçлекен врачсене Воробьевсене уйрăмах палăртмалла. Çаксемпе пĕрлех начар ĕçлекенинсене те кăтартса хăварас пулать. Вĕсен шутне Комсомольскри больница заведующийĕ Лаокопон врач, Елчĕк районĕнчи госсанинспектор Филиппов, Октябрьски районри Охлыков врач, Сĕрĕпри куç больницинче ĕçлекен В. И. Иванова врач тата ытти хăшпĕрисем кĕреççĕ.

Медицина работникĕсем ăнăçлă ĕçлеччĕр тесен, вĕсем валли йĕркеллĕ условисем туса панăлла. Çакăнпăн ĕнтĕ вырăнти сывлăх органĕсене ертсе пыраканнисен уйрăмах çине тăрса тăрăшмалла. Колхозсенчи медицина сестрисен çĕнĕ кадрĕсем пирĕн республикăра халĕ пурĕ 445 çын. Вĕсенчен нумайĕшĕсем (уйрăмăнах Етĕрнепе Шупашкар районĕсенче) ĕçĕн паха тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Пирĕн медицина сестрисем машни колхозрах пулччăр тесе тăрăшмалла, вĕсене ĕçре пулăшса, вĕрентсе пымалла.

Медицина работникĕсем вăя хĕрхенмесĕр ĕçленине пула, эпир вăрçă вăхăтĕнче хамăрăн республикăна ерекен чирсем сарăласран сыхласа хăвартăмăр, халăха сывлăх тĕлĕшĕнчен пулăшассине лайăхлатрăмăр, хĕрарăмсемпе ачасен сывлăхне сыхлас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турăмăр. Вăрçă вăхăтĕнче сывлăх учрежденийĕсен хисепĕ сыхланса юлнă кăна мар, эпир çĕнĕ больницăсем, сыватакан ытти тĕрлĕ учрежденисемпе ача-пăча учрежденийĕсем уçрăмăр.

Ялти чи лайăх больницăсен шутне Сиккассинчи, Елчĕкри, Шурутри, Етĕрнери больницăсем, Етĕрнери хирурги больници тата Шупашкар районĕнчи больница кĕреççĕ. Çав больницăсен руководителĕсем чирлĕ çынсемшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ, чирлисене апатлантарассипе пăхассине лайăх йĕркеленĕ; ĕçре вĕсем сыватмалли çĕнĕ меслетсемпе усă кураççĕ.

Отечественнай вăрçă инваличĕсене сыватас ĕç больницăсемпе амбулаторисем умне пысăк ыйтусем ӳкларса тăратрĕ. Ку тĕлĕшпе ялти больницăсем чылай ĕç тунă, анчах тумаллисем татах та нумайрах-ха.

Вăрçă вăхăтĕнче халăха тата сывлăх учрежденийĕсене медикаментсем парса тăрас тĕлĕшпе пирĕн ӳпăм йывăрлăхсемех пулмарĕç. Хальхи вăхăтра та ку ĕç ăнăçлă пырать. Анчах хăшпĕр антекăсен заведующийĕсем, таварçаврăнăшпĕпе ытларах интересленсе, халăха кирлĕ медикаментсем парасси çинчен манса каяççĕ.

Пирĕн республикăра трахомăна кĕрешесси государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Пĕтĕм республикипе илсен, 1943—1944 çулсенчи таннăйсем тăрăх, трахомлисен хисепĕ 8,2 процент пулнă. Елчĕк районĕнче вара трахомлисем 20 процент ытла. Йĕпресне Шăхасан районĕнче 15 процент ытла. Октябрьскине Вăрнар районĕнче 14 процент ытла пулнă. Хăшпĕр районсенчи сывлăх пайĕсен заведующийĕсемпе ялти врачсем, трахомăна кĕрешес ĕç пысăк вырăнта тăнине ăнланса илсе, кĕске вăхăтрах пахă çитĕнӳсем турĕç, трахомлисен хисепне чылай чакарчĕç. Ку енĕпе Елчĕк районĕнчи сывлăх пайĕн заведующине Юнусова юлташа, больницăн заведующине Комиссарова юлташа, Вăрнар районĕнчи сывлăх пайĕн заведующине Марьянчик юлташа, районри куç тухтăрне Кучинская юлташа, Çĕмĕрлери куç чирĕнчен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен пунктăн заведующине Архангельская врача палăртмалла. Çав вăхăтрах Калинино районĕнчи сывлăх пайĕ (заведующийĕ Зайцев юлташ) тата Красноармейски районри сывлăх пайĕ (заведующийĕ Алексеев юлташ) трахомăна кĕрешес ĕç çине тимсĕр пăхаççĕ.

Республикăра трахомлисен хисепĕ чакнă пулин те, ачасем хушшинче трахомăпа çĕнĕрен чирлекенсем палăраççĕ. Çакă вăл трахомăпа кĕрешес ĕçе, уйрăмах ачасене трахомăран сыхлас ĕçе учительсене тата ялти актива анлăн явăçтарма хуштать. Халĕ пирĕн трахомăна тĕпчипех пĕтересшĕн кĕрешмелле, çакна тума пур майсем те ситĕлĕклĕ.

Ĕлĕххи саманара вăрçă вăхăтĕнче туберкулез чирĕ уйрăмах вăйлă сарăлнă. Хальхи вăрçăра халăха туберкулезран сыхлас тĕлĕшпе правительство нумай вăй хурса ĕçлерĕ. Ку тĕлĕшпе Чăваш республикинче те пысăк ĕçсем тунă. Савна пула пирĕн Чăваш республикинче туберкулезпа чирлесе вилекенсен хисепĕ 1944 çулта 1942 çулхинчен икĕ хута яхăн чакрĕ. Çапах та çав чирпе чирлекенсем чылай-ха. Туберкулезпа кĕрешесси—государствăн пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Туберкулезпа чирлинисене пирĕн пурне те больницăсене выртттармалла.

Нимĕç ирсĕрĕсем хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенче венерически чирсем чылай сарса хăварчĕç. Çав чирсем малалла сарăлассинчен сыхланасси, вĕсене пĕтĕмпех пĕтересси—врачсен пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Çак ĕçе общественноçа та анлăн явăçтармалла.

Вăрçă вăхăтĕнче маляри чирĕ чылай вăйланчĕ. Анчах малярине чирлинисене тăтăшах эмеллесе сыватма 68 процент ытларах кăна явăçтарнă. Ку тĕлĕшпе Çĕмĕрле, Октябрьски, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче ĕç чылай ăнăçлăрах пырать. Анчах Шăмăршăпа Шăхасан районĕсем маляри чирĕпе питĕ япăх кĕрешеççĕ, çав районсенче чирлисене сыватма 4 процент кăна явăçтарнă. Çавăн пекех Тăвай, Первомайски, Сĕнтĕр тата Элĕк районĕсенче те япăх ĕçлеççĕ.

Маляри чирĕпе асапланакан çынсем нумай-ха, çавăпа та пирĕн ку тĕлĕшпе çирĕп мерăсем ӳшăнас пулать.

Ача амăшĕсеммĕн пирĕн партине правительство тимлĕн тăрăшаççĕ. Отечественнай вăрçа вăхăтĕнче те ку енĕпе пысăк ĕçсем тунă. СССР Верховный Советĕн Президиумĕ 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче ӳшăнăнă Указ ача амăшĕн пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк майсем уçса панĕ. Ача амăшĕсемпе ачасем вилесси палăрмаллах чакрĕ. Анчах çапах та вырăнсенче пур пек майсемпе çитĕлĕксĕр усă кураççĕ. Ача суратмалли çуртсене ача суратакăн хĕрарăмсен 60 процентĕ кăна пырать, ытти хĕрарăмсем килĕсенче тĕрлĕ карчăксем пулăшнипе суратаççĕ. Ача суратакансене пулăшас ĕç уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Чурачăк, Шăмăршă, Елчĕк, Шăхасан, Пăрачкав, Çĕрпӳ районĕсенче япăх тăрать.

Ача суратакан хĕрарăмсене 100 процентчĕпех медицина работникĕсем енчен пулăшмалла тăвас пулать. Çавăнпа та ача суратма пулăшакан учрежденисене, колхозсенчи ача суратмалли çуртсене санитарипе культура тĕлĕшĕнчен халех кăтартуллă пĕркене кĕртмелле.

Тăтăшах ĕçлекен ача ясли-сад хисепĕ чылай ӳсрĕ. 1940 çулта 37 ача ясли пулнă пулсан, 1945 çулта 49 ясли ĕçлет. Çав ясликсенче 1940 çулта 1.138 ача пулнă, 1945 çулта 2.730 ача вырнаçса тăрать. Ача пăхакан сестрасем 1940 çулта 25 çын пулнă пулсан, 1945 çулта вĕсен хисепĕ 85 çынна çитрĕ. Ача-пăча учрежденийĕсенчен уйрăмах Упăр хулинчи ача сурчĕ (заведующийĕ Березина юлташ), Атăл леш енчи механоспункти ясли (заведующийĕ Куприянова юлташ), Сĕмĕрлери ача ясли (заведующийĕ Борзова юлташ), Елĕмпе колхозĕнчи ача ясли (заведующийĕ Варварина юлташ), Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ ача ясли (заведующийĕ Минаева юлташ) лайăх ĕçленине палăртмалла. Ача-пăча учрежденийĕсене тата ӳнăр çын пулнă хĕрарăмсемпе ача ĕмĕртекен амăшĕсене апат-çимĕç парса тăрасси 1945 çулта чылай лайăхланчĕ.

Ача-пăча учрежденийĕсенчен япăх ĕçлекенниссем те пур-ха. Вĕсен шутне Ишлей, Элĕк, Шăхасан, Куславккапа Канаш районĕсенчи ача ясликсем кĕреççĕ. Çав ясликсене ачасем 20—40 процент таран кăна çӳреççĕ. Асăннă ясликсен подсобнăй хуçалăхсем сук, апатлантарас ĕçе япăх организацилеççĕ, ясликсем валли вутă тунса паман.

Медицина работникĕсен çак ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермелле, ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхласшăн тата та пысăкрах çитĕнӳсем тумалла.

Отечественнай вăрçă вăхăтĕнче тата 1945 çулта Чăваш республикинчи медицина работникĕсем санитарине эпидемп фронтĕнче нумай ĕçсем турĕç, вĕсем ерекен чирсене сарăлма памарĕç. Вархырăма ерекен чирсемпе чирлесси, вăрçăнченхи çулпа танлаштарсан, 6—8 хут, дифтерипе чирлесси 1,5 хут чакрĕ. Эпир санитари тĕлĕшпе ĕçлекенсен пысăк активне пухрăмăр. Общественнăй санинспекторсем пулса республикăра 3.406 çын ĕçлет, вунтăр киле пăхса тăракан санитари посчĕсем 8.000 организацилеççĕ.

Ялсенчи медицина работникĕсен задачи—шатралла тиф чирĕ сиксе тухассинчен пур майсемпе те сыхланасси, тиф пурри палăрсан, ăна сийĕнчех тата пĕтĕмпех пĕтересси пулса тăрать.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре—ялти врач, ялти врач участокĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ăна халăхăн пысăк йышĕн сывлăхне сыхлас ĕçе шанса панă. Ерекен чирсем сиксе тухассинчен сыхланас ĕçре, сынсем, пуринчен малтан ачасем, вилессине чакарас ĕçре ялти врач пĕрреми вырăн йышăнса тăрать. Ялти врач хăй участокĕнчи нумай енлĕ те йывăр ĕçсеммĕн ответлă пулса тăрать. Вăл фельдшерпа акушер пунктĕсенчи, трахоматозлăй пунктсенчи ĕçе, колхозсенчи медицина сестрисен ĕçне тĕрĕс организацилессишĕн, сывлăха сыхлас ĕçе ялти общественноçа активлăн явăçтарассишĕн, ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тивĕçлĕ.

Советсен вырăнти органĕсем ялти врачăн ĕçĕпе кулленех интересленмелле, врачсем валли ĕçлеме тата пурăнма лайăх майсем туса памалла.

Партипе совет организацийĕсем пулăтса пынипе, медицина работникĕсем халĕ, мирлĕ вăхăтра, халăх сывлăхне сыхлас ĕçе татах та тимлĕнрех туса пыма тивĕçлĕ. Çапла тума хăтаççĕ пире партипе правительство. Халăх хăйĕн сывлăхне сыхлаканисенчен хĕрӳллĕ те пултаруллă ĕç кĕтет

А. ЛИХАЧЕВ.
Чăваш АССР Сывлăх Халăх Комиссарĕ.

Союзниксен Берлин комендатурин ларăвĕ

БЕРЛИН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 21-мĕшĕнче союзниксен Берлин комендатурин 22-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Америка комендантĕ Баркер генерал-майор ертсе пынă.

Комендантсем магистрата йывăр тата çăмал аманнă çынсене предприятисене ĕçе илме хушнă. Çакăн пек çынсене ĕçе илмелли предприятисенче сахалтан та 10 рабочи ĕçлемелле. Ку приказ 15 çултан пуçласа 65 çула çитичченхи инвалидсене тивет. Вăл нацистсене тивмест.

Комендантсем магистратăн ĕç отделне союзниксен оккупациллĕ власĕсем ĕçлеттерекен нимĕç гражданĕсене тӳлемелли ĕç укçи çинчен инструкци ярса пама йышăннă. Комендантсем Берлин хулине 1945 çулта тĕвĕ топливо памалли лимита çирĕплетнĕ. Çавăнпа пĕрлех комендантсем горючие мĕнле тăкакланине çирĕп тĕрĕслесе пыма кирлине палăртнă.

Комендантсем хулан обербургомистрне госпитальсенчи 10.000 койкăна хĕллехи вăхăтра тытса тăма хатĕрлеме тата ерекен чир-чĕр сарăлас пулсан, татах çĕнĕрен 10.000 койка туянма 4 миллион марка тăкаклама ирĕк панă. Обербургомистра протестант чиркĕвĕсен прихочĕсене ĕç укçи тӳлеме 200.000 марка кивçен пама ирĕк панă. Çак кивçене чиркӳ прихочĕсен 6 уйăхран кая юлмасăр каялла тавăрса памалла.

Комендантсем Берлин тĕрмисенчи нимĕç надзирателĕсем валли мĕнле хĕçпăшал пулмалли çинчен калакан приказăн проектне çирĕплетнĕ. Хĕçпăталла боеприпассене надзирательсене тивĕçлĕ çар управленийĕсем параççĕ, надзирательсем вара çав хĕçпăшалпа хурал тăнă чухне çеç усă кураççĕ.

Обербургомистра хаклаппă пурлăхшăн çĕнĕрен налог пухма тытăнма ирĕк панă.

Комендантсем нимĕçсен ирĕклĕ профсоюзĕсем хулари конференцин делегачĕсен çĕнĕрен суйлама ыйтнипе кирлĕ. Çав конференцире профсоюзсен Центральный Комитетне çĕнĕрен суйламалла пулать, мĕншĕн тесен суйлав иртнĕренпе профсоюз членĕсен хисепĕ чылай ӳснĕ. Кашни суйлавçăн суйлав бюллетенне хăйĕн ямалла. Профсоюзсен Центральный Комитечĕн вара 6 уйăх хушшинче Аслă Берлинри профсоюзсен структурипе уставне туса ăна союзниксен комендатурине памалла.

Çапла тума йышăннă: Пĕрлешнĕ Паписен декларацине алă пуснă çĕршыв гражданĕсем, вĕсем столовăйсенче апатланмаççĕ пулсан, хăйсен ĕçне тивĕçлĕ категорирен пĕр категори пысăкрах апатçимĕç карточки илеççĕ.

Комендантсем союзлă тăватă держава 1945 çулхи ноябрь уйăхĕнче Берлина илсе пынă апат-çимĕç хисепне пăхса гухса çирĕплетнĕ.

1945 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Берлинра ахаль граждансене хулара çĕрле çӳреме чаракан приказа пăрахăçа кăларнă. Анчах та, кирлĕ пулсан, çак приказа кирек хăш вăхăтра та ĕçе кĕртме пултараççĕ. Обербургомистра Берлинри пур çынсене те çапла калаçа пĕлтерме хушнă: çырусене официальнăй йĕркепе çеç яма юрать. Çак закона пăсакансене ответ тыттараççĕ.

Комендантсем Берлин хулинчи нимĕç полицине хĕçпăшаллантарма йышăннă. Полицие мĕнле хĕçпăшал памалли инструкцине кайран туса хатĕрлемелле.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМПЕ ЮГОСЛАВИ ПĔР-ПĔРИН ПАТНЕ ЯНĂ НОТĂСЕМ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕ Югослави правительствин нотине пичетлесе кăларнă. Çав нотăра Югослави правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаментне Югослави республика пулса тăни çинчен пĕлтерет. Çав нотăна хирĕç Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви панă ответа та пичетлесе кăларнă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви панă ответра çапла каланă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви, 1945-мĕш çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче Югослави посолĕ панă нотăра каланине шута илсе, Югослави конституцийĕнче тунă улшăнусене йышăнать, çавăн пекех тата Югославие учредительнăй пуху йышăннă тăрăх «Югославири Федерацийлле Халăх Республики» тесе ят парса республика туса хунине те йышăнать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çапла шутлать: пĕтĕм тĕнчери халăхсен йăли тăрăх, Югославин çĕнĕ правительстви, написен çемьи членĕ шутĕнче тăрса тата Пĕрлешнĕ написен декларацийĕн принципĕсене алă пуснă членсенчен пĕри пулса тăрса, Югославин ытти государствăсем умĕнче йышăннă обязательствисемшĕн тивĕçлĕ ответлăха хăй çине илĕ, çавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Югослави хушшинчи договорсемпе килешӳсене йышăннине çирĕплетсе парĕ тесе шутлать. Çавăн çинчен калакан ĕнентерӳсене илнĕ хыççăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви хăйĕн Белград хулинчи посолне тивĕçлĕ верительнăй грамота ярса панĕ, вара çав посол Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Югослави çĕнĕ власĕ çумĕнчи посолĕ пулса тăрĕ.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ЮГОСЛАВИН РЕСПУБЛИКА СТРОЙНЕ ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югославин Лондонри посолĕпе Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Англи Югослави Халăх Республикине йышăннă май пĕр-пĕрне нотăсем панă. Англи правительстви панă нотăра çапла каланă: Англи правительстви Югославин государство йĕркинче пулнă улшăнусене, çавăн пекех тата Югославире республика конституцийĕ туса хунине йышăнать, тенĕ.

ИТАЛИРЕ ФАШИСТСЕН ВĂРТТАН ĔÇЛЕКЕН ОРГАНИЗАЦИНЕ ТУПНĂ

РИМ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Милан хулинче фашистсен организацийĕн вăрттăн ĕçлекен çĕнĕ центрне тупнă. Çав центр «Папăн беженецсемпе вăрçă ветеранĕсене пулăшма тунă комиссийĕн» çуртĕнче ĕçлесе тăнă. Унта тĕрмесемпе лагерьсенчен тарса кайнă фашистсем хӳтлĕх тупнă. Полици 19 çынна тытса хупнă. Вĕсене ухтарнă чухне фашистсемпе монархистсен пропагандистла литературине нумай тупнă тата хĕçпăшал пăртак тупнă.

ЯПОНИРЕ ВĂРТТАН ÇАР СКЛАЧĔСЕМ ТУПНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн ятларасах кайнă корреспонденчĕ Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 6-мĕш çарĕн офицерĕсем çакна палăртнă: çар хатĕрĕсене Америка çарĕн аллине пама иккĕмĕш хут хушнă пулсан та, японецсем халĕ те нумай çар хатĕрĕсене пытарса усраççĕ. Корреспондент каланă тăрăх, Америкăн 6-мĕш çарĕн отрячĕ Сикоку утравĕ çинче склад шыраса тупнă, çав складра самолет пайĕсем тултарнă ешĕксем, пухăва хатĕрленĕ планерсем, çавăн пекех тата хĕçпăшалланмалли ытти йышши хатĕрсем нумай пулнă. Çавăнтах çĕр айне пытарса лартнă резервуар тупнă, резервуарта 40.000 галлон газолин пулнă. Интереслĕ, тет корреспондент, çаксем вĕсем пурте вырăнти полици участокĕ патĕнчен пĕр мильăран та сывăхрах пулнă. Çак участок халичен çапла пĕлтерсе тăнă: Макартур штабĕ хушнă тăрăх, хĕçпăшалсемпе снаряженисене пĕтĕмĕпех Америкăн çар власĕсене панă, тенĕ.

Америка çарĕсен тепĕр отрячĕ Сикоку утравĕн çыранĕнче тимĕрпе бетонран тунă дота шыраса тупнă. Çав дота пĕр пӳрт туса пытарса хунă. Кунсăр пуçне, Сикоку утравĕ çинче Америка çарĕсен патрулĕсем пĕр шкулта рис улăмĕпе витсе хунă амуници складне тупнă. Юлашки вăхăтра суту-илӳ склачĕсенче тата ытти çĕрте те çар материалĕсен чылаях пысăк запасĕсене тупнă.

Хонсю утравĕ çинче Америка офицерĕ чиркӳ сывăхĕпе иртсе пынă вăхăтра чиркӳ патĕнчи бамбукран тытнă карта хыçне пырса пăхнă та, унта истребительсамолетсем валли туса хатĕрленĕ нумай моторсем тăнине курнă.

Корреспондент малалла çапла пĕлтерет: Америкăн Японири çарĕн контрразведкин начальникĕ Торп генерал декабрĕн 21-мĕшĕнче пресс-конференцире çапла каланă: японецсем вăрттăн ĕçлеме тытăнма хатĕрленнине эпĕ тимлĕн асăрхаса тăратăп, тенĕ. «Японири пусмăрçăсемпе эгоистла лидерсен асав шăлĕсене кăларса ывăтас ĕçре,—тенĕ малалла Торп генерал,—халĕ эпир çав асав шăлĕсене çиелтен кăна шăйăрнă-ха».

АМЕРИКАНЕЦСЕМ БОНИН УТРАВĔСЕНЕ ОККУПАЦИЛЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви корреспонденчĕ Ишидзимран çапла пĕлтерет: декабрĕн 17-мĕшĕнче американецсен тинĕс пехотин чаçĕсем Бонин утравĕсене оккупацилеççĕ. Унта вĕсене Тачивана генерал-лейтенант командир пулса ертсе пыракан Японин çарĕсем парăннă.

ЯПОНИРИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД ТУМА ЫЙТНИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Филиппин утравĕсем çинчи юристсен обществи декабрĕн 20-мĕшĕнче Трумэн патне сыру янă. Çав сырура юристсем Японин императорне тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи тĕп вăрçă преступникĕсене ыттисене те суд тумашкăн Пĕтĕм тĕнчери трибунал тӳсе хума ыйтаççĕ.

Çав сырура вĕсем Японин императорне тĕп вăрçă преступникĕсен шутне кĕртмелле мар тенине хирĕç сыраççĕ. Японин императорне агрессиллĕ вăрçă пуçласа янă преступниксенчен пĕри тесе шутласа наказани памалла, теççĕ.

РАДЕСКУНА СУДА ПАНĂ

БУХАРЕСТ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири радио çапла пĕлтерет: Румынин премьер-министрĕ пулнă Радеску генерала саботаж тунăшăн суда панă. Радескуна законпа палăртса панă тăрăх кĕртмен.

Индонезири кĕрешӳ

ГААГА, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Анета агентстви Батавирен çапла пĕлтерет: Буинтендорг хули сывăхĕнче Англипе Инди çарĕсем индонезиецсен çарĕсепе хирĕç çапăçаççĕ. Индонезиецсене хирĕç виçĕ подразделени янă, вĕсен танксем, бронеавтомобильсем тата тупăсем пур. Индонезиецсем çулсем çинче чăрмавсем туса лартнă. Англи çарĕсен тылне индонезиецсем татти-сыпписĕр винтовкăсемпе тата пулеметсемпе персе тăраççĕ. Акăлчансен икĕ салтакне вĕлернĕ, тепĕрне амантнă. Индонезиецсем хушшинче те вилнисем пур.

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 23-мĕшĕнче Лондонри радио çапла пĕлтернĕ: Батави таврашĕнче (Ява утравĕ çинче) çĕнĕрен çапăçусем пуçланса кайнă. Çав çапăçусем 36 сехет ытла пынă. Çапăçусенче союзниксен танкĕсем пулнă. Акăлчансен 11 офицерне вĕлернĕ, акăлчансен тĕрлĕ чинра тăракан тăватă çыннине тата икĕ индиеца амантнă.

Бандунгра акăлчансен «Сандерболт» тата «Москито» йышши самолечĕсем индонезиецсене тапăннă. Вĕсем индонезиецсен часĕсем çине бомбăсем пăрахнă. 17 индонезиеца тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Суматра утравĕ çинчи Меданра Англи власĕсем Япони отрядне çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнă, вĕсем çав отряда чи юлашки вăхăтра туса кăларнă танксем панă. Япони отрячĕн «индонезиецсем тапăнса пынине» часа лартмалла. Индонезиецсен темиçе ялне çунтарса янă.

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: акăлчансен çар штабĕ Ява утравĕ çинче çапăçма ятларласа парашютистсен отрядне хатĕрлет.

ЯВА УТРАВĔ ÇИНЕ ГОЛЛАНДИ ÇАРĔСЕНЕ АНГЛИ СУДНИСЕМ ÇИНЕ ЛАРТСА КУÇАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Консерватор Смай общинăсен палатинче транспорт министрĕнчен Барнсран çапла ыйтнă: эсир Ява утравĕ çине Голланди çарĕсене куçармашкăн хальхи вăхăтра суднăсем пама пултаратăр-и? тенĕ. Барнс çапла калана: Англи çав ĕç валли суднăсем парса тăнă тата халĕ те парса тăрать, тенĕ.

БЕЙРУТРА АНГЛИПЕ ФРАНЦИ КАНАШЛĂВĔ УÇĂЛНĂ

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: Бейрутра Англипе Франци канашлăвĕ уçăлнă. Çак канашлăва ирттерме Англипе Франци хушшинче Левант (Сири пе Ливан) çинчен тунă килешӳре палăртса хунă пулнă. Канашлу Англипе Франци çарĕсене Левант çĕршывĕсенчен илсе тухмалли майсене палăртса памалла. Канашлура председатель пулса Англин Левант çĕршывĕсенчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ ĕçлет. Франци представителĕсем—де Лармин генерал тата Францин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи генеральнăй резиденчĕ Бейне.

АВСТРИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ВЕНА, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Австрин çĕнĕ правительствине туса хунă. Çĕнĕ правительство пуçлăхĕ—канцлер Леопольд Фигль.

ВЕНĂНА ВЕНГРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ПЫНĂ

ВЕНА, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 17-мĕшĕнче Венăна Венгри правительствин делегацийĕ пынă. Çав делегаци Австрипе Венгри хушшинче суту-илӳ тата экономика тĕлĕшпе лайăх сыхăну пуçласа ярасси çинчен калаçма пынă. Венгри правительствин делегацийне çаксем ертсе пыраççĕ: Венгри суту-илӳ министерствин отдел начальникĕ Имре Вайда тата ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин политика отделĕн пуçлăхĕ Лориц Чикан Зики.

ПОЛЬША САЛТАКĔСЕМ ИТАЛИРЕН КИЛЕ ТАВРАННĂ

РИМ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Италире поляксен иккĕмĕш корпусĕнче тăнă 14 пин салтака, Польшăна таврăнастăн пулнисене, пурне те Польшăна ăсатса пĕтернĕ.

Декабрĕн 19-мĕшĕнче Казерта сывăхĕнчи Сервинар лагерĕнчен поляксен корпусĕнчи салтаксен юлашки эшелонне Польшăна ăсатса янă.

МАННЕРГЕЙМ ПАРИЖА ПЫНĂ

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 23-мĕшĕнче Парижа Португалири Маннергейм пынă. Финляндие тавраниччен вăл темиçе кун Парижра пăртерме шутлать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕ Саратоври государство консерваторийĕнчи Чăвашсен опера студине вĕренме плет. Вĕренме кĕрес текенсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕн начальникĕ ячĕпе 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен заявлени памалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленийĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Республикăри промысла коопераци артелĕсен ноябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ, промысла коопераци артелĕсен ноябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

Шупашкар районĕнчи **Вомпукассинчи «Паха тĕрĕ» артель** (председателĕ **Карпов** юлташ) ноябрь уйăхĕнчи мĕнпур продукцине куллен кирлĕ таварсем туса кăларма плана 126,8 процент тултарнă. Артель плана ассортимент тăрăх та тултарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçа çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи «Ленруб» артельтен илсе, Вомпукассинчи «Паха тĕрĕ» артеле пама йышăннă. Артеле социализмлă ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма 3.000 тенкĕ памалла тунă.

Шупашкар районĕнчи **Кайри Шăнкасри «Правда» артель** (председателĕ **Боляев** юлташ) ноябрь уйăхĕнчи плана мĕнпур продукци туса кăларас тĕлĕшпе 106 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе 122,5 процент тултарнă. Артель плана ассортимент тăрăх та тултарнă.

«Правда» артеле социализмлă ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма 3.000 тенкĕ памалла тунă.

Ильей районĕнчи **Чурачăк артелĕ